28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 1 ШАМАТКУН 233 (6984) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕ, ЧАССР Верховнăй Совечĕ тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Вăл коммунизмшăн çулăмлă кĕрешнĕ

(С. М. Киров вилни 11 çул тултарнă май)

Троцкистла-бухаринла ирсĕр тăшмансем Сергей Миронович Кирова вĕлернĕренпе 11 çул тултарчĕ.

Пирĕн Тăван çĕршывăн историне, пирĕн партин историне Киров юлташ совет Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ, политикăпа государствăн питĕ паллă деятелĕ, большевиксен партийĕпе совет государствине тăвакан питĕ пысăк строитель, аслă Сталинăн çывăх тусĕпе юлташĕ пулса кĕрсе юлчĕ.

Киров мĕн ачаранах асаплăха тӳснĕ, миллионшар ĕççынни массисене эксплоататорла строй мĕнле кĕлмĕçлентерсе пынине курнă. Çамрăклах Киров революциллĕ кĕрешӳ çулĕ çине тăнă. Çав кĕрешӳре вăл хăйĕн мĕнпур пурнăçĕн тĕллевне курнă. Революциллĕ кĕрешӳ ĕçне вăл вăрттăн кружока хутшăннинчен пуçланă та, вăрттăн ĕçлекен большевиксăн тӳмхахлă çулне утса тухнă, тĕрмере пăчăхса ларнă, патша йĕрлевçисем хĕсĕрленине тӳснĕ.

Уржум, Хусан, Томск, Тайга, Иркутск, Владикавказ—патша вăхăтĕнче Кировăн революциллĕ ĕçĕн çулйĕрĕ çапла пулнă ĕнтĕ. Вăл парти ĕçне ăста организациленипе, пултаруллă агитатор тата пропагандист пулнипе, вăрттăн типографисем тунипе, журналист пулнипе, революциллĕ боевой дружинăна ертсе пынипе паллă пулнă. Пур çĕрте те вăл патша пусмăрне хирĕç кĕрешекен, социализмлă революцишĕн кĕрешекен çынсене явăçтарнă, хăйĕн тусĕсемпе вĕренекенĕсене революциллĕ вăй-хăват, паттăрлăх, лăпкăлăх, Ленин—Сталин ĕçĕ çĕнтерессине вĕçĕмсĕр ĕненсе тăнин шанчăкне парса хавхалантарнă.

Киров Петроградра октябрь уйăхĕнчи штурма хутшăннă. Унтан ăна парти Çурçĕр Кавказа янă. Çурçĕр Кавказра ĕлĕкхи вăхăтра патша стройĕ, граждан вăрçи вăхăтĕнче белогвардеецсем нацисене пĕр-пĕрипе юри хирĕçтерсе пурăннă. Çак крайра совет влаçĕ тăвас йывăр задачăна кама хушмаллине Ленинпа Сталин пĕлнĕ. Кунта, Çурçĕр Кавказра, Кировăн тӳрĕ кăмăллăхĕ, татăклă решенисем йышăнма пултарни, хастарлăхпа хăрама пĕлменни, ăслăлăхпа хавхаланулăх татах та лайăхрах палăрнă. Киров тĕрлĕрен нацисем хушшинчи çыхăнусене йĕркеленĕ, Ленинпа Сталинăн наци политикине массăсене ăнлантарса панă, Çурçĕр Кавказри халăхсене совет влаçĕн ялавĕ айне пĕтĕçтернĕ, вĕсене контрреволюци вăйĕсене хирĕç кĕрешме организациленĕ.

Астрахана хӳтĕлени, Кавказ леш енне ирĕке кăларни Киров ячĕпе çыхăнса тăрать. Çав вăхăтра Кировăн вăрçă ĕçĕнчи таланчĕ вăйлăн палăрчĕ. Вăл совет государствин хĕçпăшаллă вăйĕсене организациленĕ паллă çынсенчен пĕри, паллă полководец пулнă. Каярахпа вара Киров çĕршыва социализмла улăштарас, унăн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне çирĕплетес ĕçре пысăк организаторсенчен пĕри пулса, хăйĕн талантне вăл татах та уçăмлăрах кăтартса панă.

Иксĕлми вăй-хăватлă пулнăшăн, нумай ĕçленĕшĕн, социализм çĕнтерессине çав тери çирĕп шанса тăнăшăн ăна миллионшар рабочисем, хресченсем, интеллигентсем çав тери юратнă.

Совет халăхĕсен туслăхне туса çирĕплетессишĕн Киров çав тери хытă тăрăшнă. Çак туслăхăн усси Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче питĕ лайăх палăрчĕ.

1942 çулхи август уйăхĕнче, гитлерла вăрă-хурахсем Кавказ леш енне çĕмĕрсе кĕме хавхаланнă вăхăтра, Орджоникидзе хулинче граждан вăрçи вăхăтĕнче вилнĕ 17.000 боецăн вилтăпри патĕнче Кавказри халăхсен представителĕсен митингĕ пухăннă. Митинга пухăннă халăха Кировăн — «ту ăмăрткайăкĕн» сăнарĕ çутатса тăнă. Кавказра Сергей Мироновича юратса çавăн пек ят панă. Митингра йышăннă чĕнсе каланинче граждан вăрçинче совет халăхĕ çĕнтернине, Кавказ халăхне Тăван çĕршывшăн çапăçма «Ленинпа Сталинăн соратникĕсем, ту ăмăрткайăкĕсем, пирĕн чĕремĕрсемшĕн хаклă Серго Орджоникидзепе Сергей Миронович Киров» ертсе пынине аса илтернĕ.

Кавказпа Кавказ леш енчи халăхсем Хĕрлĕ Çара пиншер-пиншер хăрама пĕлмен воинсем çитĕнтерсе панă. Гитлерла вăрă-хурахсен йыткĕтĕвĕсене хирĕç çапăçса вĕсем хăйсене те, хăйсен халăхне те чапа кăларчĕç. Çав патриотсене, нумай нациллĕ совет государствине хăюллăн хӳтĕлекенсене Киров тата большевиксен партийĕ çитĕнтернĕ кадрсем воспитани парса ӳстернĕ.

Киров кирек ăçта та—вăл вăрттăн ĕçленĕ вăхăтра-и е граждан вăрçи вăхăтĕнче, юсав тапхăрĕнче е сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче—пур çĕрте те вăл çынсене йывăрлăхсене хирĕç кĕрешме хавхалантарса шанчăк панă, хăрушлăхсем çине кĕретĕн пăхса вĕсене çĕнтерме вĕрентнĕ.

Унăн мĕнпур пурнăçĕ Тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр парăнни, унăн мухтавлăхĕпе хăватлăхĕшĕн пĕтĕм вăя пама хатĕррине кăтартса парать. Киров, темĕн тери ерĕçмен пулин те, яланах заводсенче, карапсем çинче, çар чаçĕсенче, çĕнĕ çуртсем тунă çĕрте, шкулсемпе наука учрежденийĕсенче пулма вăхăт тупнă. Вăл массăсемпе çав тери тачă çыхăнса ĕçленĕ; вăл ывăнма пĕлменни, вăл пур япала çинчен те тĕплĕн пĕлни, пурнипе те ăшă кăмăллă пулни, идейăпа принцип тĕлĕшĕнчен таса пулни пурне те тĕлĕнтернĕ.

Пирĕн çĕршыва социализмла индустриализацилес ĕçре Киров çав тери паллă вырăн йышăнса тăнă. Çĕнĕ турбогенераторсем тăвас ĕçре, синтетически каучук туса кăларассине организацилес ĕçре, çĕнĕ йышши машинăсем туса кăларас тата колхозсене çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарас ĕçре, апатитсем тупма тытăнас ĕçре тата Поляр унки леш енче промышленность центрĕсем тăвас ĕçре, Шурă тинĕс каналĕпе Çурçĕр флочĕ тăвас ĕçре,—çаксенче пуринче те Киров çав тери тăрăшса ĕçленĕ.

Сергей Миронович хăйĕн мĕнпур вăйне Совет Союзĕн экономика, çар, культура тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне çирĕплетес ĕçе панă. Социализм строительствин ăнăçăвĕсемшĕн Киров тивĕçлипех мухтанса çапла каланă: «...Кирек мĕнле шутласа пăх, вăл кама та пулин килĕшет-и е килĕшмест, пирĕн вăй-хăватне халĕ пурте курса тăраççĕ, çакăнпа ĕнтĕ, юлташсем, эпир хамăрăн аслă социализмлă Тăван çĕршыв тулашĕнче те çĕнĕрен çĕнĕ позицисем çĕнтерсе илетпĕр».

Киров ĕççыннисене яланах революциллĕ сыхăлăхлă та асăрхануллă пулма чĕннĕ. Империалистсем пирĕн çĕршыва тапăнас хăрушлăх çинчен вăл яланах асăрхаттарнă, фашистла вăрă-хурахсен захватчикла шухăш-кăмăлĕсене тăрă шыв çине кăларнă, хамăрăн çĕршыва хӳтĕлес ыйту çине питĕ тимлĕн пăхма хушнă.

Киров марксизм-ленинизм идейисене вĕрентекен питĕ паллă пропагандист пулнă. Унăн çулăмлă, идея тĕлĕшĕнчен тĕрĕс сăмахĕ социализм йĕркине, Ленинпа Сталинăн ĕçне парăннă совет патриочĕсене воспитани парса вĕрентнĕ.

«Марксизм-ленинизм вăл—ĕççыннисене хăйĕн тăшманĕсене çĕнтерме вĕрентекен пĕртен-пĕр чăн-чăн наука»,—тесе Киров хăйĕн мĕнпур вăйне, хăйĕн пропагандистла мĕнпур пысăк талантне пирĕн партин идейисене халăх хушшине сарас, массăсене идеологи тĕлĕшĕнчен воспитани парас ĕçе хывнă. Пирĕн кадрсене Киров марксистла-ленинла теорие лайăх пĕлмесĕр вĕренсе пыма, Ленинпа Сталинăн произведенийĕсене тĕплĕн вĕренме чĕннĕ. Вăл ĕçĕ çапла туса пыма хушнă: «Партин решенийĕсем, Сталин юлташ кăтартса панисем пирĕн практикăллă ĕçе кашни кунах кĕрсе пыччăр».

Киров вăл—тĕплĕн те нумай вĕреннĕ çын, принциплă тата тăшмансемпе килĕшмен большевик — хăйĕн мĕнпур ĕçне идея тĕлĕшĕнчен питĕ типтерлĕ те таса туса пынă. Вăл партире тăракан тата партире тăман большевиксене çапла вĕрентнĕ: «Пирĕн практикăри кулленхи ĕçре парти ĕçĕ пире большевикла, тӳрĕ кăмăллăн, тасан пăлхантарса тăмалла».

Халăхăн юратакан çулпуçĕпе учителĕ Сталин юлташа, Ленинăн аслă ĕçне малалла туса пыраканскерне, Киров çав тери хисеплесе, çапла каланă.

«Сталин пек улăп сăнарлă çынна урăх тупма та хĕн.

...Çак çынăн хăватлă ирĕклĕхĕ, организаторла çав тери пысăк таланчĕ партие социализмăн çĕнтерӳллĕ строительствипе çыхăнса тăракан историллĕ пысăк улшăнусене пурнăçа кĕртме май парать».

Киров парти тăшманĕсене, халăх тăшманĕсене нимĕн те шеллесе тăман. Вăл парти ĕçĕнче пулнă вăхăтра эсерсене, меньшевиксене, троцкистсене, бухаринецсене тата большевизмăн ытти йышши тăшманĕсене хирĕç вăйлăн кĕрешсе пынă. Троцкистла-зиновьевла тата бухаринла бандăсене тăрă шыв çине кăларса аркатса тăкас ĕçре Киров питĕ паллă вырăн йышăнса тăнă. Çавăншăн ĕнтĕ Тăван çĕршывăн тăшманĕсем, халăх тăшманĕсем Кирова çав тери курайман. Çав ирсĕрсем Кирова вĕлерсе партипе халăха юнаса хăратма тăрăшнă. Кирова вăрă-хурахла вĕлернĕшĕн тарăхса кайнă пирĕн халăх троцкистла-бухаринла ирсĕрсене, çав сутăнчăк бандăсене пĕтерсе тăкмаллах çапса хусрĕ. Çав ирсĕрсенчен нимĕçсен фашистла пусмăрçисем, ытти нумай çĕршывсенчи пекех, пирĕн патăмăрта та сутăнчăкла «пиллĕкмĕш колонна» тума ĕмĕтленнĕ. Анчах та гитлерла провокаторсене ытти çĕршывсенче тума май килнине СССР Союзĕнче тума май килмерĕ.

Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ Отечественнăй вăрçăра пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерӳ туса Октябрьти социализмлă революцин аслă çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлесе хăварчĕ, хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхне, чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне çăлса хăварчĕ, этемлĕхе фашизм чуралăхĕнчен хăтарчĕ.

Совет Союзĕн çĕнтерĕвĕнче Кировăн аслă ĕçĕсем те паллă вырăн йышăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн мĕнпур вăйĕпе пĕлĕвне, хăйĕн ăсне социализмлă хăватлă государство тăвас ĕçе панă.

Çулăмлă совет патриочĕн, ĕççыннисен телейĕшĕн хавхаланса кĕрешнĕ Кировăн уçă сăнарне халăх ĕмĕр-ĕмĕр асра тытса пурăнĕ.

М. И. КАЛИНИН ЮЛТАШ ХĂЙНЕ САЛАМЛАНĂ ÇЫНСЕМПЕ ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ПАНĂ ОТВЕТ

Эпĕ 70 çул тултарнă май мана салам янă организацисемпе ушкăнсене тата уйрăм çынсене пĕтĕм чĕререн тав тăватăп.

М. КАЛИНИН.

1945 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕ.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи суйлав комиссийĕ пĕлтерни

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи суйлав комиссийĕн адресĕ çапла: Гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 3 (здание Чувашпотребсоюза), II-ой этаж, комн. № 1. Телефоны: 4—30 (городской) и 3—49 (междугородний).

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ

Муркаш районĕнчи „Авангард" колхозра малтанхи хут суйлава хутшăнакан çамрăксене валли „СССР Верховный Советне суйламалли Положение" вĕренмелли кружок организациленĕ. Кружока 30 çамрăка явăçтарнă. Занятисем активлă иртеççĕ, çамрăксем суйлав законĕпе интересленеççĕ, нумай ыйтусем параççĕ. Кружока комсомолка Зоя Синичкина ертсе пырать. Çамрăксем суйлав Положенине кăна мар, ССР Союзĕн Конституцине тата ССР Союзĕн Конституцийĕн проекчĕ çинчен Сталин юлташ Советсен Чрезвычайнăй VIII-мĕш съездĕнче тунă доклада та вĕренеççĕ.

Колхозра 12 агитатор-комсомолец ĕçлет. Вĕсене учитель А. Шишкин ертсе пырать. Вăл кашни эрнерех семинарсем иртгерет тата консультаци парать.

Муркашри вăтам шкулта ĕçлекенсем суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче „Лиза Короткова" пьесăна лартса пама хатĕрленеççĕ, çавăн пекех вечерсенче юрăсем юрласа пама вĕренеççĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Районри чылай парти организацийĕсем суйлав Положенине ăнлантарса парас ĕçе лайăх йĕркелеççĕ. Турайри, Ишекассинчи, Пакишри, Чемейри парторганизацисем ку ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Анчах чылай агитколлективсенче агитаци ĕçне анлăн сарса яни курăнмасть-ха. Килтешри пуçламăш парторганизаци (секретарĕ А. Соловьев юлташ) агитколлектива йĕркеллĕн ертсе пыма тытăнман. Агитколлективра 32 агитатор, анчах кружоксем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ. Испуханри агитколлектива ертсе пыма Соловьева хушнă. Суйлав Положенине вĕренме кружок тунă пулин те, кунта пĕр заняти те иртмен-ха.

Ку парторганизаци кашни агитатор суйлав Положенине мĕн чухлĕ вĕренсе ăнланнине тĕрĕслемест. Çавна пула суйлав законне тĕрĕс мар ăнлантарса панă тĕслĕхсем те пур. Агитатор-коммунист Евстафеев суйлав законне хăй те пĕлмест, анчах çапах та вăл ăна суйлавçăсене ăнлантарса пама тытăннă. Коммунист Андреев вăхăт çукки çине ярса, агитаци ĕçне халĕ те тытăнман. Ку ял Совет территоринче 7 çул вĕренмелли шкул та пур. Учитель-коммунистсем А. Ивановăпа Григорьева суйлав Положенине ăнлантарса парас ĕçе пур учительсене те явăçтарас вырăнне, хăйсем те ку ĕçе йĕркеллĕн тытăнман.

Соловьев юлташ агитколлектив ĕçне кулленех ертсе пырас вырăнне, эпир кăтартусем панă тесе лăпланса ларать.

Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсен ăмăртăвĕ

ЙĔПРЕÇ. Вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсем ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине вăрманпромхозра ĕçлекенсем пур участоксенче те пысăк кăмăлпа хапăл туса йышăнчĕç.

Республикăри канашлура илнĕ обязательствăсене ытлашшипех тултарас тесе, халĕ вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсем хастарлăн ĕçлеççĕ. Акă Черноречински автоçул çинче ĕçлекенсем норма тăрăх кунне 80 кубометр турттарас вырăнне, кулленех 120—140 кубометр йывăç турттарса кăлараççĕ. П. Сарайкин, Н. Тимофеев, А. Волкова шоферсем хăйсен заданине кулленех 200 процентран кая мар тултарса пыраççĕ. Вăрманпромхозăн ытти участокĕсенче ĕçлекенсем те хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ.

В. АНДРЕЕВ.

ÇĔНĔ ХЫПАРСЕН ХĂМИ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнарти колхозниксемпе колхозницăсем çĕнĕ хыпарсене вăхăтра пĕлсе тăччăр тесе, ял Совет умне çĕнĕ хыпарсен хăмине тунă. Çак хăман пĕр енне çĕнĕ хаçатсем çакаççĕ, тепĕр енне колхозри кулленхи çĕнĕ хыпарсене çырса пыраççĕ.

Чăваш республикинчи колхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстерер, выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарар!

И. ЧАРЫКОВ.
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ парти, совет, çĕрĕç органĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем умне 1945 çулта колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тата унăн тухăçлăхне пур майсемпе те хăпартса пырас, ама выльăхсем хĕсĕр юлассине пĕтерес тата выльăх-чĕрлĕх вилессине чакарас, обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли апат базине анлăлатас задачăна кăларса тăратрĕç.

Чăваш республикинчи нумай колхозсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планĕ çинчен йышăннă постановление пурнăçа кĕртес тесе, выльăх-чĕрлĕх йышне чылай ӳстерчĕç. Красноармейски, Шăхасан, Çĕрпӳ тата Чурачăк районĕсем пур тĕрлĕ выльăх тĕлĕшпе те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарчĕç. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра кăçал 47 кĕсререн 35 тиха, 45 ĕнерен 46 пăру, 31 сысна аминчен 12-шер сысна çури, 86 сурăхран 92 путек илсе çитĕнтернĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 27 ĕнерен 27 пăру илсе ӳстернĕ тата кашни ĕнерен 1.510 литр сĕт суса илнĕ. Шăхасан районĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур тĕрлĕ выльăх тĕлĕшпе те ытлашшипех тултарнă, çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа усранă. Кунта 20 кĕсререн 19 тиха илсе çитĕнтернĕ. Чăваш республикинчи колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе чăннипех малта пыракан çынсем сахал мар. Вĕсем çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, хăйсен ĕçне юратаççĕ.

Анчах та выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен специалистсем пирĕн колхозсенче зоотехника ĕçне йĕркелеме тата зоотехника культурине сарса пыма пулăшнă пулсан, пирĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри малта пыракан çынсен çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах пулнă пулĕччĕç. Пирĕн республикăри районсен руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе куллен ертсе пынă пулсан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарас тĕлĕшпе кăçалхи июньпе июль уйăхĕнче тунă çитĕнӳсене эпир çирĕплетсе хăварнă пулăттăмăр.

Юлашки вăхăтра чылай районсен руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине çӳлтен пăхма тытăнчĕç, çавна пула ĕнтĕ пирĕн республика, пĕтĕмĕшпе илсен, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне лашасемпе ĕне-выльăх ĕрчетмелли государство планне тултараймарĕ.

Ама выльăх вăл колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстермелли никĕс пулса тăнине пурте пĕлеççĕ. Анчах та нумай районсем çакна яланах асра тытмаççĕ. Канаш районĕнчи колхозсенче 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ĕне-выльăх енĕпе 71 процент, сысна амисемпе сурăхсем енĕпе 88 процент кăна тултарнă. Комсомольскипе Сĕнтĕрвăрри районĕсенче те ĕç çавăн пекех япăх пырать. Çавăн пекех тата Кувакино, Первомайски Пăрачкав, Шăмăршă, Октябрьски, Сĕнтĕр районĕсенче те ама выльăх ĕрчетмелли плана тултараймаççĕ.

Пирĕн колхозсенчи таварлă сĕт-çу фермисенче 30—40 ĕнерен те икĕ-виçĕ ĕнене çеç суса пурăннин тĕслĕхĕсем те пур. Паллах ĕнтĕ, фермăри выльăх-чĕрлĕхе çакăн пек тĕрĕс мар суйласа илсен, сĕт-çу продукцийĕ те пулмасть, колхоз та тупăш илеймест. Колхоз фермисенчи выльăх-чĕрлĕхе пысăкрах тухăç илес тесе суйласа хăвармалла.

Фермăсенче пур майсемпе те ама выльăх йышне ӳстерсе пымалла, колхоз выльăх-чĕрлĕхне те, колхозниксен выльăх-чĕрлĕхне те пĕтĕлентерме пултаракан лайăх аçа выльăхсем фермăра çителĕклĕ таран пулмалла. Пирĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăртрах аталантарса пырас тĕлĕшпе çак маларах каланисем питĕ паха условисем пулса тăраççĕ.

Пирĕн республикăри колхозсенче халĕ те выльăх-чĕрлĕх, уйрăмах çамрăк выльăхсем вилсе колхозсене пысăк сиен кӳреççĕ. Çавăнпа та пур выльăх-чĕрлĕхе те сыхласа усрас тĕлĕшпе колхоз руководителĕсен тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксен ответлăхне ӳстермелле. Çапла йĕрке тумалла: кашни выльăх вилни çинчен колхоз правленийĕнче тата колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явмалла, çапла вара выльăх-чĕрлĕх малашне вилме пултарассине сирсе пымалла.

Райисполкомсен, парти райкомĕсен, райçĕрĕç пайĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен СССР Совнаркомĕ 1944 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче «Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче çамрăк выльăхсене пăхса ӳстермелли тата çитĕнсе çитнĕ выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа усрамалли задание иртерсе тултарнăшăн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановление фермăсенче ĕçлекен работниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла, правительствăн çак паха решенине кашни пăру пăхакана, ытти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхе пăхакана, кашни сысна пăхакана, сурăх пăхакана, конюха ăнлантарса памалла. Лайăх ĕçленĕшĕн закон тăрăх хушса тӳлемелли йĕркене пур колхозсенче те пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла. Çакă ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕх вилсе пĕтессине чакарма тата çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ӳстерессине вăйлатма пулăшĕ.

Выльăх-чĕрлĕх пуринчен ытларах хĕлле вилет. Колхозра апат-çимĕç çителĕксĕр пулсан, выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене ăшă тытмалла туса юсаман пулсан, кунта вара выльăх-чĕрлĕх татах та ытларах вилет. Çакна шута илсе пирĕн малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма вăхăтрах питĕ тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Анчах та халĕ хĕл пуçланчĕ пулин те, пирĕн республикăри нумай колхозсенче витесене тата ытти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсаса йĕркене кĕртмен. Çакнашкал фактсем расна Елчĕк, Шупашкар, Кувакино, Первомайски, Ишлей, Муркаш тата ытти хăшпĕр районсенче нумай. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхсене пула выльăх апачĕ ытларах пĕтет, мĕншĕн тесен сивĕ çĕрте тăракан выльăха нумайрах апат кирлĕ.

Пуринчен ытларах çамрăк выльăхсене валли лайăх та йĕркеллĕ витесем кирлĕ. Çамрăк выльăх витисем кашни колхозрах пулмалла. Питех май килмесен, çамрăк выльăха йышăнма ферма çывăхĕнчи пĕр-пĕр пушă çурта уйăрса памалла. Мĕнпур çамрăк выльăха ытти выльăхсенчен уйрăм, ăшă та типĕ çуртйĕрте тытса усрамалла.

Çак çывăх вăхăтсенчех фермăсенчи чӳречесемпе алăксене, урайсемпе маччасене, çивиттисене тĕрĕслесе тухмалла, тĕрĕсленĕ май палăртнă çитменлĕхсене халех пĕтермелле, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ «Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртмелле (вăл постановление кăçалхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче пичетлесе кăларнăччĕ). Выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкĕл хĕл каçарни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарас тĕлĕшпе татăклă вырăн йышăнса тăнине яланах асра тытмалла.

Райисполкомсемпе парти райкомĕсен колхозсенче выльăх-чĕрлĕх мĕнле хĕл каçнине, уйрăмах выльăх апатне мĕнле тыткаланине куллен тĕрĕслесе пымалла. Çапла йĕрке тăвас пулать: райисполкомсемпе парти райкомĕсен ларăвĕсенче районри колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕллехи вăхăтра пăхса усрани çинчен кашни уйăхрах сӳтсе-явмалла.

Выльăх апатне халĕ те хатĕрлесе пымалла-ха. Мĕнпур арпа-улăма типтерлĕ пухса хумалла, фермăсем çывăхнерех турттарса пымалла. Выльăх апатне правлени çирĕплетнĕ план тăрăх тăкакламалла. Апатăн тутăлăхне ӳстерес тесе, выльăха параччен ăна хатĕрлессине организацилемелле. Ку тĕлĕшпе колхозсене ялхуçалăх специалисчĕсен пулăшса пымалла. Выльăх апатне сыхласа усрассишĕн, ăна перекетлĕ тыткалассишĕн колхоз председателĕ ответлă пулса тăрать. Ревизи комиссийĕсен выльăх апатне тăкакланине тăтăшах тĕрĕслесе пымалла.

Партипе совет тата çĕрĕç органĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен лашасем ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла. Лашасемпе усă курас тата вĕсене пăхса усрас ĕçри обезличкăна халех пĕтермелле. Райисполкомсен комиссийĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсемпе пĕрле, колхозсенче лашасене пăхса усрас ĕç мĕнле пынине государство енчен кашни уйăхрах тĕрĕслемелле, тĕрĕслени результачĕсене вара райисполком ларăвĕсенче сӳтсе-явмалла. Лашасем валли çителĕклĕ таранах апат хатĕрлесе хумалла. Халĕ ĕнтĕ лаша кăрчанкине тĕппипех пĕтермелли вăхăт çитрĕ. Хĕрлĕ Чутай, Канаш, Октябрьски, Шупашкар, Первомайски районсенче халĕ те лашасем кăрчанкăпа чирленĕшĕн ветеринари работникĕсемпе зоотехниксене, çавăн пекех тата районри руководительсене намăс мар-и?

Кăçал та, иртнĕ çулсенчи пекех, пирĕн республикăри колхозсен вăрман хатĕрлес ĕçре хăйсен лашисемпе чылай ĕçлеме тивет. Колхоз правленийĕсен вăрмана вăрман хатĕрлеме янă колхозниксемпе пĕрлех тата конюхсене те ямалла, вĕсем вара колхоз лашисене тĕрĕс пăхса усранишĕн ответлă пулаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен кăштах аса илмелле. Государствăна аш-какай тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса татас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене пур колхозсен те тата пур уйрăм хуçалăхсен те çак кунсенчех парса татмалла. 1946 çулшăн аванс шучĕпе государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парассине организацилемелле.

Отечественнăй аслă вăрçăн хаяр çулĕсенче пирĕн республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышне чылай ӳстерчĕç, колхоз хуçалăхне çирĕплетрĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксем умĕнче халĕ, мирлĕ аталану вăхăтĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тăвас задача тăрать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç, уйрăмăн илсен, кăçал выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарас ĕç пирĕн фермăсенче мĕнле çынсем ĕçленинчен нумай килет. Çавăнпа та выльăх-чĕрлĕх пăхакан кадрсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарса тухасси çине питĕ тимлĕн пăхмалла. Хăшпĕр колхозсенче выльăх-чĕрлĕх пăхакан çынсене пĕр сăлтавсăрах фермăран кăларса урăх ĕçе куçараççĕ. Çакăн пек хăтланнисене тĕппипех пĕтермелле, мĕншĕн тесен работниксене час-час улăштарни пире питĕ хакла ларать.

Пирĕн хăшпĕр выльăх-чĕрлĕх специалисчĕсем фермăсенче зоотехника культурине сарас тĕлĕшпе çителĕклĕх ĕçлемеççĕ-ха, колхозниксене выльăх-чĕрлĕхе лайăхрах пăхма вĕрентмеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх пăхакан колхозниксене зоотехникăна тĕплĕн вĕрентессине организацилемелле: конюхсемпе ытти тĕрлĕ выльăхсене пăхакансем валли уйрăм кружоксем тумалла, çав кружоксенче кашни эрнере сахалтан та пĕр хут вĕрентмелле. Кружока зоотехник ертсе пымалла, хăшпĕр чухне вара опытлă колхозниксене явăçтарма юрать.

Чăваш республикинчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксен канашлăвĕ мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх специалисчĕсене СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе каларĕ. Çак ăмăртăва хутшăнса ĕнтĕ колхозри выльăх-чĕрлĕх йышне татах ӳстермелле, выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçармалла. Канашлура пулнă колхозниксен, выльăх-чĕрлĕх специалисчĕсен, ялти коммунистсемпе комсомолецсен çак патриотла чĕнсе каланине колхозниксене тĕплĕн каласа памалла, вăрçă хыççăнхи малтанхи хĕлре выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкĕл хĕл каçарма пĕтĕм колхозниксене мобилизацилемелле, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе хăвармалла. Хамăрăн Тăван çĕршыва ытларах аш-какай, сĕт-çу, çăм тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса памалла. Пирĕн Сталин юлташ вĕрентнĕ пек ĕçлемелле!

Малта пыракан колхоз ферми

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесе парас задачăна пурнăçланă çĕрте колхоз фермисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Сăрьелĕнчи «Марс» колхоз членĕсем (председателĕ орденоносец А. Гаязов юлташ) лайăх ăнланса илнĕ.

Колхозăн 200 сурăх тата 138 ĕне-выльăх пур. Сурăхсем ĕрчетес плана тултарнă: кăçал 69 сурăхран 82 путек илсе ӳстернĕ, 33 ĕне пăруланă.

Ĕне сăвакансен кăçал кашни ĕнерен 1.200 литр сĕт суса илмелле пулнă. Ф. Салахутдиновăпа Т. Давлетшина çакăн пирки пĕр-пĕрипе алă пуссах договор çырнă. Салахутдинова юлташ вăтам шутпа 1.375-шер литр сĕт суса илнĕ ĕнтĕ. Давлетшина та унран юлмасть.

Пăру пăхакан З. Хасянова 20 пăру вырăнне 31 пăру пăхать.

Ĕне тата сурăх фермисенче пурĕ 10 çын ĕçлет. Вĕсем пурте выльăх-чĕрлĕх ĕçне юратса тăваççĕ, витесене тасатса тăраççĕ. Фермăсен заведующийĕ Отечественнăй вăрçă инваличĕ З. Закиров коммунист вара обществăллă выльăх-чĕрлĕхшĕн чунран тăрăшать. Вăл ку ĕçре 8 çул ĕçлет, кашни çулах премисем илет. Иртнĕ çулта ăна Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Закиров юлташ ĕçленĕ вăхăтра колхоз фермăсенчен çулленех пысăк тупăш илсе, фронта нумай пулăшнă. Кăçал та 9 уйăх хушшинче кăна 16.423 тенкĕлĕх тупăш илнĕ. Халĕ колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли пур парăмсене те парса татнă. 1946 çулшăн 37 центнер аш-какай парса хунă.

Колхоз ферми хĕле лайăх хатĕрленсе кĕчĕ. Çамрăк выльăхсем валли уйрăм ăшă витесем пур. Ытти витесем те пурте юсавлă. Шăтăк-çурăксем пур вырăнсене çуллах тăмпа сĕрсе питĕрнĕ, шал енчен извĕçпе шуратнă, дезинфекци туса тасатнă. Хĕлле çитерме выльăхсем валли 144 тонна силос хывнă, 2 тонна вĕлтрен тата армути хатĕрленĕ.

Фермăсенче агитаци ĕçне те авăн туса пыраççĕ. Ку ĕçе партин пуçламăш организаци секретарĕн заместителĕ Г. Гимранова организациленĕ. Гимранова юлташ 4-мĕш çул ĕнтĕ ветсанитар пулса ĕçлет. Хăй ĕçне чыслăн туса пырать. Фермăсенчи выльăхсене чирлесе вилме памасть.

«Марс» колхоз правленийĕпе ял Совечĕ тата партин пуçламăш организацийĕ колхоз фермисемпе тачăн çыхăнса ĕçлеççĕ. Час-часах фермăсен заведующийĕн отчетне итлеççĕ, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшаççĕ.

М. ЕГОРОВ.

Нимĕçсен тĕп вăрçă преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

НОЯБРĔН 27-МĔШĔНЧИ КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Каçхи ларура Редера хӳтĕлекен тухса каланă. Вăл çакăн пирки кăмăлсăр пулни çинчен каланă: айăплакансен представителĕсем судра айăпланакансенчен ыйтса тĕпченин протоколĕсене вĕсемпе хӳтĕлекенсем паллаштиччен вуласа пама шутлаççĕ, кунсăр пуçне тата паян айăплакан пире ĕнер панă списокра кăтартман документсене вуласа пачĕ, тенĕ. Хӳтĕлекен çавна хирĕçлесе каланă. Америка енчен айăплакан Олдермен айăпланакан Редертан ыйтса тĕпченин протоколне вуласа пама сĕнсен, хӳтĕлекен çакăнпа килĕшнĕ, анчах та вăл трибуналта çав протоколăн тепĕр пайне вуласа парассипе килĕшмен, мĕншĕн тесен эпĕ кун пирки Редерпа калаçма ĕлкĕреймерĕм, тенĕ.

Кун хыççăн Америка енчен айăплакан Олдермен сăмах калама пуçланă. Вăл чи малтан çапла каланă: эпĕ халĕ Редертан ыйтса тĕпченин протоколĕн хӳтĕлекен кăтартнă пайне вуласа парăп, ыран вара унăн иккĕмĕш пайне вуласа парăп, мĕншĕн тесен хӳтĕлекен ыранччен Редерпа калаçса илме ĕлкĕрĕ, тенĕ. Çав протоколта Германин çар флочĕн верховнăй командованийĕ 1937 çулта кăларнă кĕнеке çинчен—Шусслер капитанăн «тинĕс-çар флочĕ 1919—1935 çулсенче Версальти договора хирĕç кĕрешни» ятлă кĕнеки çинчен Редер мĕн каласа панине çырса хунă. Хăйĕнчен ыйтса тĕпченĕ чухне Редер çавăн пек кĕнеке чăнах та пулнине йышăннă. Вăл тата çапла каланă: вăл кĕнеке çине «секретлă» тесе çырнăччĕ, ăна тинĕс-çар тĕлĕшпе ĕçлекен сахал çын хушшинче салатнă, тенĕ. Айăплакан: çав кĕнекене пичетлесе кăларнине кам ырланă? тесе ыйтсан, Редер çапла каланă: Шусслер капитан мана çавăн пек кĕнеке çырăп тесе каларĕ, тенĕ. Анчах та Редертан ыйтса тĕпченĕ чухне çакă палăрнă: Шусслер тинĕс-çар флочĕн секретлă архивĕсене кĕме пултарнă, вăл çав архивсенчи материалсемпе усă курнă та.

Айăплакан çав Шусслер кĕнекине суд протоколĕсем çумне хушса хунă, ăна вăл айăпласа çырнин çак пункчĕсем тĕрĕссине кăтартакан документ вырăнне шутласа хушса хунă: Германи вăрттăн хĕçпăшалланни çинчен, Версальти договорпа Локарнăри договора пăсни çинчен калакан пунктсем тĕрĕссине кăтартма хушса хунă. Çав кĕнекене пĕтĕмпех вуласа пама май килмен пирки, айăплакан унăн оглавленине çеç вуласа парать.

Çак кĕнекен пайĕсен ячĕсем тата кĕнеке планĕ кăтартса панă тăрăхах, — тет айăплакан,—Германи пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă пĕтнĕ хыççăнах, Версальти договор ирĕк паманнине пăхмасăрах, тинĕс çинче хĕçпăшалланма пуçланă. Çав кĕнекере Германи Голландире, Испанире тата Финляндире подводнăй лодкăсем вăрттăн туни çинчен каланă. Хăйĕнчен ыйтса тĕпченĕ чухне Редер çакна йышăннă. Вăл Германин пăртак хĕçпăшалланма кирлĕ пулнине Германие Польша тата Франци хăратса тăнипе ăнлантарса пама хăтланнă. Айăплакан Олдермен пĕр документ вуласа парать. Çав документра каланă тăрăх, социал-демократ Носке пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă хыççăн çар министрĕ пулса ĕçленĕскер, тинĕс суднисем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен департамента Берлинри аслă технически шкул тесе ят парса пытарса хăварма сĕннĕ. Нимĕçсем 180 туппа пĕтерсе тăкасран çăлса хăварнă, союзниксен контроль комиссине вĕсем улталанă. Хăйĕнчен ыйтса тĕпченĕ чухне Редер тинĕс-çар флочĕн кадрĕсене Голландире, Финляндире, Испанире тата Аргентинăра вăрттăн хатĕрленине тунман. 50 тонна таякан пĕрремĕш подводнăй лодкăна Германи Испанире тунă. Ăна вăл Версальти договор çавăн пек кимĕсем тума чарнине пăхмасăрах тунă. Çав çĕршывсенчех тата тинĕс летчикĕсене вĕрентсе хатĕрленĕ. Флот тумашкăн уйăрса хунă фонд пулнă. Айăплакан çакăн хыççăн Гитлер Редерпа 1934 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче калаçнине çырса хунă хута вуласа парать. Гитлерпа калаçнă чухне Редер çапла каланă: 1935 çулта хĕçпăшалланма уйăрса хунă фонд çав ĕç валли кирлĕ укçан пĕр пайĕ çеç пулса тăрать, çавăнпа та флот хăйĕн планĕсене пурнăçа кĕртеймест пуль, тенĕ. Гитлер ăна çапла каланă: вăл фонда нумай ӳстерме пулаймĕ, анчах та эпĕ, кирлĕ пулсан, Лее «Рабочи фронт» фончĕсенчен тинĕс-çар флочĕ валли 120—150 миллион марка укçа уйăрса пама хушăп, тенĕ. Унтан Герингпа тата манпа калаçнă чухне Гитлер çапла каларĕ,—тесе çырса хунă Редер:—флота малтан палăртса хунă чухлĕ ӳстерме кирлех, мĕншĕн тесен пирĕн флот Скандинавирен тимĕр рудине илсе килсе тăма май параймасан, нимĕнле вăрçă та вăрçма май пулмасть, тенĕ. Редер подводнăй лодкăсем тума кирли çинчен калаçнипе Гитлер килĕшнĕ.

Айăпланакан Редер хăйĕнчен ыйтса тĕпченĕ чухне тинĕс флочĕ тунине мĕнле майпа пытармалли çинчен хăй панă приказсен хăшпĕр вырăнĕсене вуласа панă. Сăмахран, çар карапĕсене тунине документсемпе приказсенче транспорт суднисем тунă пек кăтартса çырнă. Айăпланакан Редер 1938 çулхи февралĕн 18-мĕшĕнче Берлинра тинĕс-çар командованийĕн штабĕнче çырса хатĕрленĕ питĕ секретлă документăн уйрăм вырăнĕсене вуласа панă. Çав документра Германин «Шарнхорст» тата «Гнейзенау» ятлă линкорĕсем тĕрĕссипе миçе тонна тайни çинчен тата çак тĕлĕшпе Британи влаçĕсене мĕнле калани çинчен çырнă вырăнсем пур. «Шарнхорст» линкор 31.300 тонна тайнă, анчах та ун çинчен: 26.000 тонна таять, тесе каланă. «Х.—1» ятлă карап 56.200 тонна тайнă, анчах та ун çинчен: 46.850 тонна таять, тесе пĕлтернĕ. Çав документ тата хуть те мĕнле докладра та çав карапсен йывăрăшне Англи, Япони е Россия кăтартма пултарнă цифрăсенчен ӳстерсе кăтартма чарнă, Германи мĕн таран хĕçпăшалланнине пĕлтересшĕн мар пулса çавăн пек тунă.

Айăплакан çавăн пекех тата Германин тинĕс-çар командованийĕн пĕр документне илсе кăтартать. Çав документра Германи тинĕс-çар флочĕ тунине мĕнле майпа пытармаллине питĕ тĕплĕн кăтартса панă.

Унтан айăплакан Германи Рейн облаçне тытса илни çинчен калать. Германи 1935 çултах çĕнĕрен çар повинноçĕ туса хунă, тет. Унтан вăл Бломберг генерал-фельдмаршал 1935 çулхи майăн 2-мĕшĕнче алă пуснă документа илсе кăтартать. Çав документра командовани тип çĕр çинчи çара, тинĕс-çар флотне тата сывлăшри вăйсене Рейн облаçне тытса илме хушни çинчен каланă. Çак ĕçе, ыттисем ан пĕлччĕр тесе, приказра «вĕрентни» тесе ят панă. Рейн облаçне çавăн пек вĕрентме хушакан приказ илнĕ хыççăн йышăнмалла пулнă. Çакăн пек приказсене Гитлер пĕтĕм тĕнчене: Германи Европăра нимĕнле çĕрсене те туртса илме шутламасть, вăл Версальтипе Локарнăри договорсене хисеплет, тесе ĕнентернĕ вăхăтра панă.

Айăплакан малалла Гитлерăн рейхстагра 1935 çулхи майăн 22-мĕшĕнче каланă сăмахĕн уйрăм вырăнĕсене вуласа парать. Гитлер унта çапла каланă: Германи Версальтипе Локарнăри договорсене питĕ т[illegible] пурнăçа кĕртсе пырать, тенĕ. Анчах 1936 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче Германи Рейн облаçне оккупациленĕ, çапла вара вăл договора пăснă. Каярахпа, общественность куçĕ умĕнче хăйне тӳрре кăларма хăтланса, Гитлер намăса пĕлмесĕр çапла каланă: Франципе Совет Союзĕ тата Чехословакипе Совет Союзĕ договорсем тунă пирки, Локарнăра тунă договор пăрахăçа тухрĕ, тенĕ. Рейн облаçне йышăннă хыççăн Гитлер каллех: Германи Европăра нимĕнле çĕрсене те туртса илме шутламасть, тесе каланă. Анчах Германи çавăн чухнех Австрие тытса илме хатĕрленме пуçланă.

Рейн облаçне тытса илнĕ вăхăт тĕлне Германин 12 корпус тата 36 дивизи пулнă, Версальти договор рейхсверта 100.000 çын таран çеç тытса тăма ирĕк панă.

НОЯБРĔН 28-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн ирхи ларăвĕнче Америка енчен айăплакан Олдермен гитлерла преступниксем пĕтĕм тĕнчене хирĕç вăрçăпа тухма хатĕрленни çинчен малалла каланă. Паян вăл Гитлерăн Австрие тытса илмелли планĕ çинчен каланă. Гитлеровецсем Австрие чи малтан тытса илнĕ. Олдермен çапла калать: эпĕ çак ĕçе документсемпе çеç мар, Джордж Мессерсмит свидетель каласа панине вуласа парса та тăрă шыв çине кăларасшăн, тет. Мессерсмит нумай вăхăт хушши Америкăн Берлинри генеральнăй консулĕ пулса ĕçленĕ, унтан вăл Америкăн Венăри посолĕ пулса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра Мессерсмит Мексикăра Америка посолĕ пулса ĕçлет. Çавăнпа та вăл каланине суда хут çине çырса панă. Хӳтĕлекенсем çав документа хирĕç калама хăйсен представительне трибуна патне ярассĕ. Вĕсем Мессерсмита суда чĕнме ыйтаççĕ, унтан судра ыйтса тĕпчеме май пултăр, теççĕ.

Айăплакан хӳтĕлекенсем çавăн пек ыйтнине пурнăçа кĕртме йывăррине ăнлантарса парать, хӳтĕлекенсем çапла тума тăрăшни суд ĕçне чарса лартса вăраха ярать, тет. Трибунал председателĕ лорд Лоуренс хӳтĕлекенсене çапла калать: трибунал, хăйĕн уставĕпе усă курса, пĕр-пĕр документа судра пăхма юранипе юраманнине хăй татса парать, трибунал уставĕ мана хӳтĕлекенсен форма енчен çеç пăхса каланă шухăшĕсене пăрса яма ирĕк парать, тет.

Çапла ăнлантарса панă хыççăн айăплакан Мессерсмит каласа панине вулама тытăнать. Мессерсмит çапла каланă: хамăн ĕçе кура, манăн гитлерла Германин руководителĕсемпе, çав шутра çакăнта ларакан айăпланакансемпе Герингпа, Шахтпа, Франкпа, Фрикпа, Папенпа, Функпа, Кейтельпе, Редерпа, Дениццпа тата Крупп фон Боленпа нумай вăхăт хушши çыхăнса тăма тиврĕ, тенĕ.

Эпĕ вĕсемпе пуринпе те калаçнă. Айăпланакансем, мана хăйсем енне çавăрас тесе, манпа уççăнах калаçатчĕç.

Нацистла правительство туса хунă хыççăнах Германи правительствин аслă чиновникĕсемпе аслах мар чиновникĕсем мана çапла каларĕç, тет Мессерсмит: Австрие Германипе пĕрлештересси политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен кирлĕ. Австрие Германипе кирек мĕнле майпа та пĕрлештересех пулать», терĕç.

Мессерсмит малалла çапла каланă: Германи ун чухне питĕ вăйсăр пулнă, çавăнпа вăл ют çĕршывсене тапăнма пултарайман. Çавăнпа та гитлерла каварлашуçăсем малтанхи вăхăтра Австрире Германири пек режим, фашистла диктатура пек режим тума тăрăшнă. 1934 çулхи çуркуннепе çулла пĕтĕм Австрире (свидетель унта Америка посланникĕ пулса кайнă) террорла, саботажла, сăтăрла ĕçсем анлăн сарăлса кайнă. Вĕсене Австрири гитлеровецсем организациленĕ. Австрири гитлеровецсене Германири гитлеровецсен пуçлăхĕсем ертсе пынă, Германи Австрири гитлеровецсене кирлĕ материалсем тата инструкцисем парса тăнă.

1934 çулхи июль уйăхĕнче Австрири гитлеровецсем пăлхав тунă.

Çав пăлхав çинчен калакан йышлă материалсене пăхса тухса, Мессерсмит «вăл пăлхава Германи правительстви пĕлнине çеç мар, организациленине те» кăтартса панă.

Олдермен малалла Германи правительстви çав пăлхава организациленине кăтартакан документсене вуласа парать. Çав пăлхав ăнăçманни Австри пирки хатĕрленĕ плансене пăчлантарса лартнă пулин те, гитлеровецсем каялла чакман, вĕсем хăйсен тактикине çеç улăштарнă. 1934 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче Гитлер Папена Германин Вена хулинчи посланникĕ пулса ĕçлеме ыйтса çыру янă. Çав ĕçе туса тăма хушни питĕ паха пулнине палăртса, Гитлер çапла каланă: Сире хăйне уйрăм ĕç паратăп, çав ĕçе тунă чухне Эсир ют çĕршыв ĕçĕсен министрне мар, мана хама пăхăнса тăратăр, тенĕ.

Австри тĕлĕшпе тата Европăн пĕтĕм кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи пайĕ тĕлĕшпе Гитлер мĕнле политика тытса пыни Папенăн Гитлер патне 1935 çулхи майăн 17-мĕшĕнче янă çырăвĕнчен те курăнать. Çав çырура Папен Гитлера, тĕрлĕ провокацисем туса, Австри правительствине хăйĕн вырăнне нимĕç агенчĕсене ларттарас тĕлĕшпе канаш парать, çакăн хыççăн чикĕри чармавсене пĕтерсе лартмалла, вара хĕçпăшаллă вăйсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса килĕштерсе ĕçлеттермелле, тет. Пур çĕрте те кунта Германири гитлеровецсемпе Австрири гитлеровецсене пĕрлештерсе ярасси çинчен, Европăн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи мĕнпур çĕршывсене тапăнма палăртса хунă плана пурнăçа кĕртесси çинчен пырать. Австрие тытса илнĕ хыççăн, тесе çырать Папен, «эпир Вăтаçĕрти Европăн политикине çĕнĕрен активлăн хутшăнма пуçлăпăр».

Вунă минут хушши перерыв тунă хыççăн трибунал председателĕ хӳтĕлекенсене тепĕр хут çапла астутарать: Мессерсмит свидетельтен ыйтас тесен, эсир хăварăн ыйтăвăрсене трибунала хут çине çырса пама пултаратăр, тет.

Трибунал малалла Америка енчен айăплаканăн материалĕсене итлеме пуçлать. Олдермен гитлеровецсен ĕçĕсем çинчен Мессерсмит каласа панине вуласа парать.

Айăплакан суда пĕр документ парать. Çав документран çакă питĕ лайăх курăнать: Австрири гитлеровецсен Германири агенчĕсене Австрин ун чухнехи правительствине пулăшса тăнă çынсен списокĕсене çырса хатĕрлеме хушнă. Çав çынсене гитлеровецсем питĕ хаяррăн тыткалама шутланă. Австрири гитлеровецсен тĕп задачи Австрире влаçа хăйсен аллине тытса илесси пулнă. Çав ĕçе тумашкăн, Германирен хушнă тăрăх, çапăçу вăхăтĕнчи мĕнпур меслетсемпе усă курмалла пулнă. Австри çĕрĕ çинче Германи чиккипе Югослави чикки çумĕнче террорла икĕ центр тумалла пулнă. Германире «Австри легионĕ» хатĕр тăнă.

Райнерăн Зейсс-Инкварт патне янă çырăвĕнче тата çав çырупа пĕрле янă отчетра (трибуналта вĕсен уйрăм пайĕсене вуласа панă) Австрири гитлеровецсен ĕçĕсем çинчен каланă. Çав ĕçре Зейсс-Инкварт мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен айăплакан çапла калать: Зейсс-Инкварт чи малтанхи Квислинг пулнине, вăл Норвегири Квислингчен ĕçленине трибунал уйрăм ĕнентерсе каламасăрах йышăнма пултарать, тет.

Мессерсмит çырса пани Австрие Германи çумне хутшăнтарас ĕçе хатĕрленнĕ çĕрте айăпланакан Папен мĕнле вырăн йышăнса тăнине те питĕ лайăх кăтартса парать.

Айăплакансем çав документсене вуласа парсан, трибуналăн ноябрĕн 28-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕ хупăннă.

НОЯБРĔН 28-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн ноябрĕн 28-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче айăплакан Олдермен нимĕçсем Австрин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне пĕтерсе хума хатĕрленнине малалла кăтартса панă. Çав каварлашăвăн тĕп шухăшĕ çакă пулнă: уççăнах хăратса, Австрие тулашĕнчен хĕсмелле пулнă, тепĕр енчен — Австрире хăйĕнче диверсиллĕ ĕçсем тумалла пулнă. Çак ĕçсене Австрире нимĕç агенчĕсем пулнă йышлă гитлеровецсем тумалла пулнă. Айăплакан трибунала Австрири ĕçсем çинчен çырнă отчет парать. Çав отчета Австрири гитлеровецсен пĕр руководителĕ Райнер доктор çырнă, ăна вăл импери комиссарне тата гаулейтера Бюркеле янă.

Райнер хăйĕн отчетĕнче, чи малтан, Австрири «национал-социалистсен юхăмĕ» текен юхăм икĕ питлĕ те преступникла пулнине кăтартса парать.

Айăплакан малалла Зейсс-Инквартăн Геринг патне янă çырăвне вуласа парать. Çав çырура Австрири гитлеровецсен пуçлăхĕ ак çакна ĕнентерме тем пекех тăрăшать: Австрие сутас ĕç, эпĕ пурнăçа кĕртнĕскер, питĕ йывăр пулчĕ, вăл «массăсем урăх çулпа кайнипе» çеç мар йывăр пулчĕ, вăл хамăн юлташсемпе кĕрешмелле пулнипе те йывăр пулчĕ, тет. Австри халăхĕ хирĕç тăчĕ пулин те, эпĕ «фюрер» хушнине çапах та пурнăçа кĕртме пултартăм, тесе мухтанать Зейсс-Инкварт. Анчах Австрие гитлерла Германи Зейсс-Инкварт жуликла хăтланнине пула çеç мар çăтса янă, Австрие вăл хăй пĕр шеллемесĕр хĕснине пула та çăтса янă. Папен хăйĕн Гитлер патне янă çырăвĕсенче Австрие час-часрах хĕсме сĕннĕ. Хăй вăл, Австри правительствине гитлеровецсене кĕртес тесе, çав правительствăна хĕснĕ.

Германи ют çĕршывсенчен хăранипе çеç Австрие уççăнах тытса илме шикленсе тăнă. Çакна кăтартса парас тесе, айăплакан Америка посолĕн Буллитăн меморандумне вуласа парать. Буллит унта 1936 çулхи майăн 18-мĕшĕнче халь айăпланакан Нейратпа калаçни çинчен çырнă. Нейрат ун чухне уççăнах çапла каланă: Германи Австри ыйтăвне ак çак виçĕ сăлтав пирки хăвăрт та татăклăн татса параймасть: пĕрремĕшĕнчен, Муссолини хăйĕн çарĕсене Австри чикки патне илсе пырса тăратнă, вĕсем пырса çапма хатĕр тăраççĕ, Муссолини хăйĕн шухăшне пурнăçа кĕртме тăрăшасси пирки эпĕ иккĕленместĕп; иккĕмĕшĕнчен, Австрире гитлеровецсен юхăмĕ ӳссе пырать, гитлеровецсем хăрушă та «çирĕп мерăсем» йышăнмасăрах влаçа хăйсен аллине тытса илĕç; виççĕмĕшĕнчен, Германи хăйĕн Франци енчи чиккине тĕреклетмесĕр Италипе хирĕççе кайма пултараймасть, тенĕ.

Айăплакан çакна палăртса хурать: икĕ çул иртсен, гитлеровецсем çапах та çав «çирĕп мерăсене» пурнăçланă, мĕншĕн тесен Австрири гитлеровецсем влаçа Германи пулăшмасăр хăйсен аллине тытса илме шутлани пăчланса ларнă. Çакна кăтартас тесе, Шушниг свидетель каласа панине трибунала пĕлтерес терĕм те эпĕ, тет айăплакан (Шушниг вăл Австрире канцлер пулса ĕçленĕ). Анчах Зейсс-Инкварта хӳтĕлекен çав Шушниг каласа панине вулаттарасшăн мар, вăл Шушнига суда чĕнме ыйтать, ăна суда чĕнни Зейсс-Инкварта хӳтĕлеме питĕ кирлĕ, тет. Канашласа пăхнă хыççăн трибунал хӳтĕлекен ыйтнине пурнăçа кĕртме килĕшет; свидетель мĕншĕн те пулин суда килеймесен, вара унăн çырса каласа панине вуламалла пулать, тет.

Айăплакан малалла çапла калать: Австри Германи умĕнче питĕ нумай чакнă пулин те, гитлерла Германи, хăйĕн уççăн тата вăрттăн ĕçлекен агенчĕсемпе усă курса, Австри правительствине çаплах хĕснĕ. Айăплакан юлашкинчен Америкăн Берлинри консулĕ тата Венăри посланникĕ пулса ĕçленĕ Мессерсмитăн иккĕмĕш хут каласа панине вуласа парать. «Эпĕ Германире ĕçлесе пурăннă чухне, 1933 çултах, Германири аслă чиновниксемпе нацистсенчен Германи Европăн кăнтăр-хĕвелтухăç пайне Чехословакирен пуçласа Турцие çитиччен туртса илме шутлани çинчен пĕлтĕм. Хăйсем каланă тăрăх, вĕсем Австрипе Чехословакие тытса илме шутланă. Нацистла режимăн малтанхи тапхăрĕнче Европăн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче тăрса юлнă пайне политикăпа экономика енчен тĕрĕслесе тăма шутланă, вĕсем ун чухне çав çĕршывсене çăтса ярса вĕсен суверенитетне пĕтерсе лартасси çинчен çав тери уççăн калаçман. Анчах та вĕсем Европăн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи пайĕпе çеç кăнăçман. 1933 çултан пуçласах тата унччен те пĕр паллă нацист Украина пирки çапла каланă: Украина «пире тăрантаракан çĕр» пулса тăмалла, Европăн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕ пирĕн алăра пулсан та, пире Аслă Германи халăхне тăрантарса пурăнма Украина кирлĕ пулать», тенĕ.

Мессерсмит çапла каланă: гитлеровецсем хăйсен тĕллевĕсене çавăн чухнех вăйпа е хăратса пурнăçа кĕртме шутланă, тенĕ. Вăл Германи калама çук хăвăрт хĕçпăшалланса пынине кăтартса панă, хăй Вашингтона янă депешăсене илсе кăтартнă. Вĕсем те Германи Европăн кăнтăр-хĕвелтухăç тата хĕвелтухăç пайĕнчи çĕршывсене тапăнма пĕр чарăнмасăр хатĕрленсе пынине кăтартаççĕ. Мессерсмит малалла çапла каланă: гитлерла Германин пуçлăхĕсем ытти государствăсемпе тунă договорсене вĕсем усă пулма пăрахиччен çеç тытса пыма шутланипе, хăйсен тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре кирек мĕнле майсемпе те усă курма шутланипе уççăнах мухтаннă. Çак документа вуласа панă хыççăн трибуналăн 7-мĕш кунĕнчи каçхи ларăвĕ хупăннă.

НОЯБРĔН 29-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 29-мĕшĕнчи ирхи ларура Америка енчен айăплакансен представителĕ Олдермен малалла каланă. Вăл гитлеровецсем Европăпа Австрие тапăнма хатĕрленнине тĕплĕн кăтартса панă. Олдермен Америкăн Австрири посланникĕ пулса ĕçленĕ Мессерсмит каланине тепĕр хут илсе кăтартать (Мессерсмит хăйне Венăна ĕçлеме яриччен Америкăн Берлинри генеральнăй консулĕ пулса ĕçленĕ). Вăл Гитлер Австрие тапăнма хатĕрленни çинчен Мессерсмит каланине пĕтĕçтерсе парать. Гитлеровецсем, тет вăл, çĕршывра сăтăрла ĕçсем тунипе пĕрлех çав çĕршыва тулашĕнчен политикăпа çар енĕпе хĕснĕ. Мессерсмит калани тĕрĕссине Зейсс-Инквартпа Австрири гитлеровец Райнерăн импери комиссарĕ Бюркель патне çырнă çырăвĕсем те кăтартса параççĕ. Австрири гитлеровецсем Германипе тата Гитлерпа таччăн çыхăнса тăнине йышăннă, мĕнпур инструкцисене вĕсем Гитлертан илсе тăнă; Австрири фашистсен каварлашуллă организацийĕ уççăн та, вăрттăн та ĕçлесе тăнă; гитлеровецсем хăйсен сăтăрла ĕçĕнче Австрире министрсем пулса ĕçленĕ фашистсемпе усă курнă; Австрипе Германи тунă килĕшӳ гитлеровецсене Австрие тата Австри правительствине йышлăраххăн кĕрсе кайма май паракан хатĕр пулнă.

Папен çырнă çырусем ак çакна тата тепĕр хут çирĕплетсе параççĕ: Германи правительстви Австрири гитлерла партин уççăн ĕçлекен пайĕпе те, вăрттăн ĕçлекен пайĕпе те таччăн çыхăнса тăнă. Папен хăйĕн 1935 çулхи майăн 17-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче Гитлера çапла каласа панă: эпĕ вăрттăн ĕçлекен фашистсен пуçлăхĕпе Леопольд капитанпа яланах таччăн çыхăнса тăратăп, ку çеç те мар, эпĕ тата Австри правительствине хирĕç сăтăрла ĕçсем тăвас тĕлĕшпе ăна Эсир панă канашсене каласа паратăп, тенĕ. Папен çырăвĕсем, Райнерпа Бюркель пĕр-пĕрин патне çӳретнĕ çырусем айăпланакан Зейсс-Инквартăн çырăвĕсем, çавăн пекех тата Мессерсмит каласа пани çакна лайăх кăтартса параççĕ: Папен Австрин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне пĕтерсе лартма тăрăшнă çеç мар, вăл тата Австрин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне пĕтерсе лартас ĕçĕн нумай тапхăрĕсенче ĕçе пуçарса яраканни тата хистесе тăраканни пулнă.

Мессерсмит свидетель çакна кăтартса панă: Австрие тапăнма хатĕрленни гитлеровецсен пĕтĕм Европăри халăхсен ирĕклĕхне пĕтерсе лартмалли питĕ пысăк планĕн пуçламĕш пайĕ çеç пулнă. Çак ĕçĕн пĕрремĕш тапхăрĕнче вĕсем Европăн кăнтăр-хĕвелтухăç пайне хирĕç пынă, мĕншĕн тесен çав çĕршывсене тытса илни Европăра вăрçă пуçланса каяс пулсан Германин флангĕпе тылне шанчăклă тума пултарнă, кунсăр пуçне вăл вăрçă вăхăтĕнче нимĕçсене кирлĕ япаласем парса тăмалли база панă. Гитлеровецсем влаçа хăйсен аллине тытса илсенех Австрин, Чехословакин, Венгрин, Югославин тата ытти çĕршывсен тĕнчери позицине хавшатас тесе дипломати йĕркипе питĕ вăйлă кампани пуçласа янă. Çав çĕршывсене мĕн те пулин туса пама сăмах парса тата пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе, Германи вĕсене Берлин куçĕнчен пăхакан тума тăрăшнă. Югославие вăл Австрипе Венгри территорине касса пама сăмах панă, Венгрие—Югослави территорине, Румынине—Венгри территорине касса пама сăмах панă.

Мессерсмит малалла çапла каланă: «Хăйĕн программине пурнăçа кĕртес ĕçре хăйпе килĕштерсе ĕçлекенсене наградăсем пама сăмах панă вăхăтрах Германи çав çĕршывсенче, уйрăмах та Австрипе Чехословакире, тĕрлĕ ушкăнсене пĕр-пĕринпе хирĕçтернĕ, çакна вăл нацистсене хирĕç пыракан оппозицие вăйсăрлатас тата нацистсемпе фашистсем майлă тăракан ушкăнсене вăйлатас тесе, çав çĕршывсене Германи программине мирлĕн йышăнтарма хатĕрлес тесе тунă. Вăл Австрире мĕн хăтланни çинчен эпĕ каларăм ĕнтĕ. Чехословакире, Судетри нимĕçсемпе усă курса, Германи çавăн пекех хăтланнă. Мана лайăх пĕлекен çынсем çапла каласа пачĕç: нацистла парти Гейнлейн партине пулăшма 1935 çулхи çуркунне пулнă суйлав вăхăтĕнче çеç 6 миллион рейхсмарка укçа панă. Югославире вăл хорватсемпе сербсем хушшинчи ĕлĕкрен пыракан хирĕçӳсемпе усă курнă, Габсбург монархине çĕнĕрен вырăна лартассипе хăратнă. Венгрире вăл çĕр ĕçĕнчи йывăрлăхсемпе усă курнă, çав вăхăтрах вăл Венгри правительствине 1936 çулта Германи посолне Маккензена каялла чĕнсе илтерттересшĕн пулса, Венгрири нимĕçсен нацисчĕсене уççăнах хавхалантарнă. Венгрипе Польшăра Германи халăха коммунизмпа тата Совет Российипе хăратнă. Румынире вăл еврейсене хирĕç пыракан шухăш-кăмăлсене вăйлăлатнă, еврейсем Румыни промышленноçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăни çине кăтартнă, çавăн пекех тата Лупеску еврей пулнине асăрхаттарнă. Паллах ĕнтĕ, Германи Кодреан урлă фашистсен тимĕр гвардине укçа парса тăнă. Çак «дипломатиллĕ» мерăсем, Германин хĕçпăшалланмалли çав тери пысăк программипе çирĕплетнĕскерсем çав çĕршывенче, уйрăмах та Югославире, Польшăра тата Венгрире, чылай пысăк ĕçсем туса хунă. Вĕсем çав çĕршывсене Гитлер планĕсене хирĕç пыракан çĕршывсем çумне хутшăнма кансĕрленĕ, анчах çапах та вĕсене нацистла Германин активлă союзникĕсем туса хурайман. Югославие ертсе пыракан политикăллă деятельсем çакна ĕненме пуçланă: нацистла режим влаçа хăй аллинче тытса тăрĕ, вăл хăйĕн тĕллевĕсене пурнăçа кĕртĕ, çавăнпа Югославишĕн Германи майлă пулни хăрушсăртарах пулĕ», тенĕ вĕсем.

Анчах та гитлеровецсем хăйсен сăтăрла ĕçĕсене кӳршĕри пĕчĕк çĕршывсенче çеç туман. Вĕсем Европăри ытти çĕршывсене те хăратма тăрăшнă.

«Итали Австрие тытса илме уççăнах кансĕрленĕ вăхăтра Германи Италин Абиссинине тытса илес шухăшĕпе усă курнă,—тет свидетель Мессерсмит,—вăл Италие Франципе тата Англипе хирĕçтерме тăрăшнă, Германи Италин Абиссинине тытса илмелли планне ырлани вырăнне Италие Германи программине йышăнтарма тăрăшнă.

Нацистсем Италие колонисем тытса илес ĕçре хăйсем мĕншĕн пулăшнине пытарма тăрăшман та. 1935 çулхи çулла мана çапла каларĕç: нацистсем Италипе Абиссини хушшинче вăрçă пуçланса каяссине питĕ хытă кĕтеççĕ, çав вăрçă вĕсене Вăтаçĕрти Европăра хăйсене кирлĕ пек ĕçлеме май пама пулĕччĕ, терĕç».

Мессерсмит каласа панинче хăйне уйрăм параграф пур. Унта çапла каланă: гитлеровецсем, çав меслетсемпе ĕçлесех, Европăна хирĕç ĕçлеме ирĕк илнĕ тата Англипе Франци пĕр-пĕринчен уйăрнă.

Айăплакан 1937 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче Гитлер патĕнче пулнă канашлу çинчен çырнă отчета вуласа парать. Çав канашлури çынсене (вĕсенчен нумайĕшĕ халь айăпланакансен тенкелĕ çинче лараççĕ) Гитлер Европăна майĕпен тапăнса пымалли программа çинчен каласа панă. Çав программăна вăл виçĕ тапхăра пайланă: Австрие тытса илесси, Чехословакие тытса илесси (çаксем Европăра вăрçă пуçланас пулсан Германин тылне шанчăклă туса хумалла пулнă), юлашкинчен, Германи умĕнче тăракан Европа ыйтăвĕсене татса парасси.

Трибунала панă тепĕр документ Гитлер туха-туха каланипе чарăнса тăманнине кăтартса парать. Вăл документ—мобилизаци планĕ пулса тăрать, унта Австрие хирĕç Германин мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсем çапăçассине палăртса хунă.

Иодле хӳтĕлекен Экснер доктор айăплакансем çав документпа усă курнине хирĕç калать. Вăл каланă тăрăх, мобилизаци планĕ нимĕçсем Австрие тапăнма шухăшланине кăтартса параймасть, мĕншĕн тесен ăна «кирлĕ пулсан усă курма çеç» çырса хатĕрленĕ. Вăл судран çав документăн ытти пайĕсене вуласа пама ыйтать, çав пайсенчен Германин генеральнăй штабĕ ытти майсене те палăртса хуни курăнать, тет.

Трибунал председателĕ Лоуренс лăпкăн çеç çапла ăнлантарса парать: айăплакан вăхăт çитсен çав документăн ытти пайĕсене те вуласа пама пулчĕ, трибунал çакна тĕрĕс тесе шутлать. Хӳтĕлекенсен аллинче çав документ пур, вĕсем унăн кирек хăш пайне те вулама пултараççĕ, тет.

Залра лăпкăн итлесе ларакан çынсем кулаççĕ. Олдермен çапла калать: хӳтĕлекен каланă тăрăх, Австрие хирĕç вăрçă ĕçĕсем тумалли плана «кирлĕ пулсан усă курма çеç» тунă пулать, çав план теорилле план çеç пулнă пулать, çавăнпа вăл Австрие тытса илме шутланине çирĕплетсе пама пултараймасть пулать. «Хӳтĕлекен пире çапла каласа ĕнентересшĕн,—тет айăплакан:—нацистсем вĕсем кирлĕ пулсан усă курма çеç плансем тунă, Германи Австрие тапăнман, истори йăнăш тунă, тесе ĕнентересшĕн».

Олдермен малалла Америка посолĕ Буллит государство секретарьне хăй 1937 çулхи кĕркунне Нейратпа тата Герингпа калаçни çинчен пĕлтернине вуласа парать. Геринг ун чухне уççăнах çапла каланă: Германи Австрипе Чехословакие тытса илме шутлать, Германи тулашĕнчи мĕнпур нимĕçсене пĕрле пухма шутлать, çакна вăл «искусственнăй майпа тунă чикĕсене» пĕтерсе лартнипе тума шутлать, тенĕ. Австрие тытса илессине çеç мар, ăна тытса илме хатĕрленессине те нимĕçсем вăйлă хĕснипе пурнăçа кĕртнĕ. Австрири гитлеровецсене правительствăра вырăн парасси çинчен калакан 1937 çулхи февралĕн 11-мĕшĕнчи конкордата та Шушниг Германирен питĕ вăйлăн хĕснипе алă пуснă.

Айăплакан суда Иодлĕн дневникне парать. Çав дневникра Австрие мĕнле хĕсни çинчен каласа панă. Гитлеровецсем ытти çĕршывсене хăратмалли çар ĕçĕсене пурне те айăплакан Кейтель палăртса хунă. Сăмахран, Кейтель Австрире Германи вăрçа хатĕрленни çинчен калакан хыпарсем анлăн сарма сĕннĕ. Çав хыпарсем хушшинче Германин çар аташине Вена хулинчен Берлина чĕнсе илни çинчен калакан хыпар та пулмалла пулнă. Олдермен çак документри нумай хыпарсем тĕрĕс пулнă, тесе каласан, Нейратпа Фриче хытă кулаççĕ.

АВСТРИ ПАРЛАМЕНТНЕ СУЙЛАНИН ТАТĂКЛĂ РЕЗУЛЬТАЧĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕп суйлав комиссийĕ каланă тăрăх; Паци советне (Австри парламентне) депутатсем çак партисенчен суйланнă: халăх партийĕнчен—55 çын, социалистсен партийĕнчен—76 çын; коммунистсен партийĕнчен—4 çын.

«ДИНАМО» КОМАНДИПЕ «РЕНДЖЕРС» КОМАНДИ ФУТБОЛЛА ВЫЛЯНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Глазго хулинче Мускаври «Динамо» командипе Глазго хулинчи «Ренджерс» команди футболла вылянă. Вăйă 2:2 хисеппе пĕтнĕ. Стадионра 90.000 çын пулнă.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Константин Константинович Родионов юлташа Совет Союзĕн Грецири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулса ĕçлеме лартнă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99. ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00686 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.